# Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем

### Редакцирен

***Хальхи вăхăтра Раççейре 13 наци проекчĕ пурнăçланать. «Çак наци проекчĕсен тĕп тĕллевĕ – Раççей çĕршывĕнче пурăнакансен пурнăç шайне ӳстересси, пахалăхлă вĕренӳ, сывлăх сыхлавне çынсемшĕн меллĕ тăвасси, çемьесене пулăшу кӳресси, чухăнлăх шайне пĕчĕклетесси», – çапла пĕлтерчĕччĕ Владимир Путин.***

***Унтанпа наци проекчĕсем пирки массăллă информаци хатĕрĕсенче тăтăшах пĕлтерме тытăнчĕç. Мĕншĕн тесен наци проекчĕсене пурнăçлани Раççейĕн пуласлăхĕпе тӳррĕнех çыхăннă.***

***Кăçал «Çĕнтерӳ ялавĕ» район хаçачĕн редакцийĕ «Пирĕн малашлăх. Наци проекчĕсем» социаллă пĕлтерĕшлĕ проектпа Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин грантне тивĕçрĕ. Çавна май, асăннă министерство пулăшнипе, хаçатра уйăхсерен «Пирĕн пуласлăх. Наци проекчĕсем» ятлă кăларăм кун çути курĕ. Кăларăмри хыпарсем урлă Раççейри наци проекчĕсем çĕршыв, регион тата район шайĕнче епле пурнăçа кĕрсе пынипе паллашма май пулĕ.***

## Хăватлăн аталанмалли çул-йĕр

***2019 – 2024 çулсенче çĕршывра 13 наци проекчĕ пурнăçланмалла. Вĕсем Раççейре пурăнакансен пурнăçне пур енлĕ лайăхлатма тивĕç***

### «Вĕренӳ»

**«Вĕренӳ» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 784,5 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 10 проекчĕ пурнăçланать.**

Вĕренӳ пахалăхĕпе Раççей тĕнчери чи лайăх вунă çĕршыв шутĕнче пулмалла. Çĕршыври аслă шкулсен тĕнчери чи лайăх 500 аслă шкул йышне кĕмелле. Раççейре аслă пĕлӳ илессине ют çĕршыв çыннисемшĕн илĕртӳллĕ туса хумалла, ют çĕршывсенчи абитуриентсен йышне икĕ хут ӳстермелле. Профессин вăтам пĕлĕвне пысăк пахалăхлă тумалла тата çак вĕренĕвĕн престижне ӳстермелле: професси хатĕрленĕвĕн 100 центрне тата хальхи вăхăтри 5 пин мастерской туса хута ямалла. Çĕнĕ шкулсем тумалла, уйрăммăн – ялсенче. Хушма пĕлӳ системин меллĕхне ӳстермелле, 2024 çул тĕлне хушма пĕлĕве 18 çулчченхи ачасен 80 процентне явăçтармалла. Пур шкула та пысăк хăвăртлăхлă Интернетпа тивĕçтермелле. Раççей гражданĕсене пурнăçĕн пур тапхăрĕнче те вĕренме майсем туса памалла, учительсен профессие ăсталăхне ӳстермелли системине йĕркелемелле. Ырă ĕç тăвакансен ретне çĕршывра пурăнакансен 20 процентĕнчен сахал мар çынна явăçтармалла.

### «Наука»

**«Наука» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 635,9 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 3 проекчĕ пурнăçланать.**

Тĕнчери аталанăвăн тĕп енĕсемпе çырнă наука ĕçĕсен шучĕпе Раççей малта пыракан пилĕк çĕршыв йышне кĕмелле. Ертсе пыракан наука организацийĕсенче приборсен базине çурри таранах çĕнетме палăртнă. Пилĕк агробиотехнопаркран кая мар ĕçлеме тытăнмалла, вĕсен кашнин тупăшĕ çултала́кра 1 млрд тенкĕрен пĕчĕк пулмĕ. Раççей çĕршыври тата çĕршыв тулашĕнчи ертсе пыракан ăсчахсемпе çамрăк тĕпчевçĕсемшĕн илĕртӳллĕ пулса тăмалла.

### «Цифра экономики»

**«Цифра экономики» наци проекчĕн бюджечĕ пĕтĕмĕшле 1837,7 млрд тенкĕпе танлашать. Çак наци проекчĕн шайĕнче федерацин 6 проекчĕ пурнăçланать.**

Интернет кашни çыншăн меллĕ пулса тăмалла. Хуласене 5G çыхăнупа тивĕçтермелле. Граждансен, бизнесăн тата патшалăхăн информацийĕсене хӳтĕлемелле. Çĕнĕ технологисене алла илсе ĕçленĕрен экономикăри тĕп отраслсен эффективлăхне ӳстермелле. Цифровизаци аталаннине кура малашлăхра ĕçлеме пултаракан кадрсем хатĕрлемелле. Çĕнĕ сферăсене инвестицисем хывмалла, çавна май цифра экономикине аталантарма уйăракан укçа-тенкĕ суммине пысăклатмалла.

## Наукăна явăçтараççĕ



**Февралĕн 8-мĕшĕнче Муркашри вăтăм шкулта район шайĕнчи «Ломоносов вулавĕсем» ятпа наукăпа практика конференцийĕ иртрĕ.**

«Ăна Михаил Ломоносов ячĕпе ăнсăртран çыхăнтарман. Паллă вырăс ăсчахĕ хăй пурăннă вăхăтри тĕрлĕ наукăра чылай çитĕнӳ тума пултарнă. Вăл пирĕншĕн пуриншĕн те патшалăх деятелĕ, ăсчах, поэт, патриот», – палăртрĕ хăйĕн сăмахĕнче шкул директорĕ Николай Смирнов.

Конференцие Муркаш шкулĕнче вĕренекенсемсĕр пуçне Турай, Оринин, Юнкă, Сыпай шкулĕсенчи вĕренекенсемпе вĕсен ăслăлăх ертӳçисем – вĕрентекенсем те хутшăнма кăмăл турĕ.

Тăватă секци ĕçлерĕ: «Социаллă гуманитари тата экономика ăслăлăхĕсем», «Çут çанталăк ăслăлăхĕсем», «Математика тата информаци технологийĕсем», «Тăван çĕршыв». Экспертсем 5 – 8 классенче вĕренекенсен ĕçĕсене тата 9 – 11 классенче вĕренекенсенне уйрăммăн хак пачĕç.

Экспертсем тенĕрен. Вĕсен йышĕнче Чăваш патшалăх университечĕн истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ, документсене йĕркелесе пырассин, информаци ресурсĕсен тата историн хушма дисциплинисен кафедрин доценчĕ Петр Матюшин, энергетика тата электротехника факультечĕн деканĕ Владимир Ковалев профессор, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн доценчĕсем Наталия Мардарьева тата Ольга Нестерова, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш наци музейĕн çĕнĕ тата хальхи вăхăтри истори секторĕн ертӳçи Андрей Зарубин, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш Республикин Патшалăх архивĕн ертӳçин çумĕ Федор Козлов, çавăн пекех Муркаш район администрацийĕн вĕренӳ пайĕн информаципе методика центрĕн ертӳçи Ирина Ершова тата Муркаш шкулĕн физикăпа математика вĕрентекенĕ Владислав Смирнов пулчĕç. Ачасем хăйсен темисене мĕнле пĕлнине тĕрĕс хак парас тесе пурне те тĕрлĕ ыйту пачĕç. Çапла пурĕ 59 тĕпчев ĕçне итлерĕç.

Конференцире темăсене те кăсăклисене суйласа илнĕ. Сăмахран, «Хура-шурă йĕр çинче роботăн пĕр тикĕс каймалли алгоритмĕ», «Пирĕн çемье бюджечĕ», «Чăваш АССР çыннисен Крыма нимĕç-фашист оккупацийĕнчен хăтарассинчи тӳпи», «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Совет Союзĕн тата Германи салтакĕсен жетонĕсен функцийĕсем», «Напиткăра çын организмĕшĕн сиенлĕ ионсене палăртасси», «Чашăк-тирĕк çумалли губкăсем: бактерисем ĕрчекен вырăн е тĕпелте усăллă япала?» тата ытти те.

Конференцие пĕтĕмлетнĕ май, экспертсем ачасен ăслăлăх ĕçĕсенче тĕпчев компоненчĕсене сахал мар усă курнине палăртрĕç, ĕçсене пĕтĕмĕшле япăх мар шайра тесе хакларĕç. Конференцие çĕнтерисене тата призлă вырăн йышăннисене дипломсем парса чысларĕç, вĕсен ертӳçисене «Дети Отчизны – достойная смена» хăй тытăмлă коммерциллĕ мар пĕрлешӳвĕн Тав сăмахĕпе хавхалантарчĕç.

Конференцие хутшăннă кашни ача хăйне валли çĕннине чылай пĕлни курăнчĕ. Унта хатĕрленнĕ май, ачасем наука ĕçне çырас йĕркепе паллашнă, доклада ăнланмалла вуласа пама хăнăхнă, ăна сӳтсе явма хатĕрленнĕ. Çакăн пек конференци ачасене ăслăлăх тата тĕпчев ĕçĕсем çырассипе кăсăклантарма, кунпа пĕрлех профессие суйлавне те çăмăллатма пулăшать.

## Чăваш Енре мĕнле ĕçсем пурнăçланă?

**«Вĕренӳ» наци проекчĕн шайĕнче Чăваш Енре регион проекчĕсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Вĕсем çаксем:**

- «Современная школа»,
- «Успех каждого ребенка»,
- «Учитель будущего»,
- «Молодые профессионалы»,
- «Новые возможности для каждого»,
- «Социальная активность»,
- «Цифровая образовательная среда»,
- «Поддержка семей, имеющих детей».

Кашни проектпа тĕрлĕ ĕç пурнăçлама палăртнă. Çавăнпа та вĕсене пурнăçа кĕртсе пыни вĕренĕвĕн конкурентлăх шайне ӳстерме, ачасене тĕрлĕ енлĕ аталантарма тата социаллă активлă çын туса ӳстерме пулăшмалла.

«Вĕренӳ» наци проекчĕн шайĕнче республикăра 2019 çулта мĕнле ĕçсем пурнăçланă-ха?

Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, «Современная школа» регион проекчĕн шайĕнче шкул ачисем валли пурĕ 1400 çĕнĕ вырăн туса панă.

21 муниципалитетра цифра тата гуманитари профилĕсен «Точка роста» вĕренӳ центрне пурĕ 40 уçнă. **Муркаш районĕнче «Точка роста» центрсем Йӳçкасси тата Мăн Сĕнтĕр шкулĕсенче уçалчĕç.** Кашни центр валли 1,6 млн тенкĕ уйăрнă.

Çак проектпа республикăри 5 коррекци шкулĕн пурлăхпа техника базине çĕнетнĕ.

«Успех каждого ребенка» регион проекчĕн шайĕнче те пĕлтĕр пысăк калăпăшлă ĕçсем пурнăçланă. Республикăра иккĕмĕш «Кванториум» технопарк уçнă. Унăн тытăмĕнче 6 наука лабораторийĕ. Çулталăкра кунта 800 ача тӳлевсĕр вĕренме пултарать.

Чăваш патшалăх университетĕнче ачасем валли Абруков ячĕллĕ Наука коллабораторийĕн çуртне уçнă (инженери, робототехника, IT-сфера).

Чăваш Енре пултаруллă ачасемпе çамрăксене тупса палăртма, вĕсене аталантарма ятарлă центр тăваççĕ. Ăна «Сириус» моделĕпе йĕркелеççĕ. Центр кусăмлă-кусăмсăр майпа та ĕçлемелле. 2019 çулта ăна валли 215 млн ытла тенкĕ уйăрнă.

«Эткер» никĕсĕ çинче ачасен хушма пĕлĕвĕн модельлĕ центрĕ ĕçлет.

Çак проектпа ялсенчи шкулсенче спортзалсем юсанă. Пĕлтĕр çак тĕллевпе 30 миллион тенкĕ тăкакланă. **2019 çулта Муркаш районĕнче Шетмĕпуçĕнчи тата Турайри шкулсенче спортзалсем юсаса çĕнетрĕç.**

«Цифровая образовательная среда» проектпа килĕшӳллĕн Канаш хулинче цифра вĕренĕвĕн «IT-клуб» центрне йĕркеленĕ. Ăна валли çӳллĕ шайри технологиллĕ оборудовани тупма тата капиталлă юсав ĕçĕсем иртерме 42 миллион тенкĕ уйăрнă. Кун пек центрсене кăçал та, малашнехи çулсенче те тума пăхса хунă.

Иртнĕ çул Чăваш Ен выляса илнĕ грантпа цифра вĕрентĕвĕн тĕллевлĕ модельне йĕркелеме усă курĕç. Унпа республикăри пурĕ 238 шкул, техникум, колледж валли оборудовани туянĕç (кашни учреждение 2,2 млн тенкĕлĕх).

«Молодые профессионалы» проект шайĕнче техникумсемпе колледжсенче пурĕ 25 çĕнĕ мастерской йĕркелеççĕ (пурĕ 88,5 млн тенкĕлĕх). Кăçал 5 колледж хăйсен пурлăхпа техника базине пуянлатас тĕллевпе пурĕ 206,055 млн тенкĕлĕх ĕçсем туса ирттерĕç.

«Поддержка семей, имеющих детей» проектпа пăхса хунă укçа-тенкĕпе ашшĕ-амăшĕн вĕренӳ тата воспитани парас ыйтусенчи компетентлăхне ӳстерме усă кураççĕ, консультаци пункчĕсем йĕркелеççĕ.

Регион шайĕнчи ытти проектпа пăхса хунă ĕçсене те пурнăçласа пыраççĕ.

Çавăн пекех «Демографи» наци проекчĕн шайĕнче Чăваш Енре «Содействие занятости женщин – создание условий дошкольного образования для детей до трех лет» проекта пурнăçа кĕртсе 2019 çулта 16 çĕнĕ ача сачĕ тунă.

*Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.*